# Мăн кун

## (5-мĕш классемпе Мăн кун уявне ирттермелли сценари)

***Л.П. ШКОЛЬНИКОВА,** Йĕпреç районĕнчи Эйпеçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литератури тата тăван ен культури вĕрентекен;*

***В.Д. ПЕТРОВА,** Йĕпреç районĕнчи Эйпеçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта музыка вĕрентекен*



**Тĕллевĕ:** ачасене чăваш культурине упраса хăварма, пирĕн несĕлсем ирттернĕ çурхи-кĕрхи, çуллахи-хĕллехи йăла-йĕркесене асра тытма хăнăхтарасси; тăван ен культури урлă кашни ачан чунчĕрине, кăмăл-сипетне, шухăштуйăмне, илемлĕхне аталантарма пулăшасси; вĕсене уçă кăмăллă, тӳрĕ чунлă, çивĕч туйăмлă, тарăн сисĕмлĕ пулма вĕрентесси.

**Уявюхăмĕ**

А ч а с е м *(кăшкăрса чупса тухаççĕ).* Хĕвел тухать! Хĕвел тухать! Мĕнле хитре! Пăхăр-ха!

С т а р и к *(патак çине таянса кĕрет).* Ырă кун пултăр, ачасем!

А ч а с е м. Ырă кун пултăр, асатте!

С т а р и к. Эпĕ те çутă хĕвеле кĕтсе илме килтĕм.

А р ç ы н а ч а. Асатте, çакăнта тунката çине ларăр-ха. Эсир пире пĕр-пĕр юмах е халап каласа параймăр-ши?

С т а р и к. Эпĕ çут Хĕвелпе усал Вупăр çапăçни çинчен халап пĕлетĕп. Итлес килет-и? Апла пулсан ман çывăхарах ларăр та итлĕр.

А ч а с е м. Итлес килет! Итлес килет!

С т а р и к. Хĕл тăршшĕпех Хĕвел çине Вупăр карчăк янипе усал сывлăшсем тапаннă. Вĕсем Хĕвеле пĕлĕт çинчен сĕтĕрсе антарасшăн пулнă, çавăнпа Хĕвел сайра хутра кăна курăнкалама пуçланă. Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем Хĕвеле тыткăнран хăтарасшăн пулнă. Пĕр вун икĕ çамрăк каччă пуçтараннă та, вĕсене ватăсем пил панă. Ун хыççăн паттăрсем хĕвел тухăçнелле Хĕвеле хăтарма тухса кайнă. Çичĕ кун та çичĕ каç çапăçнă каччăсем Вупăр тарçисемпе, юлашкинчен пурпĕр çĕнтернĕ. Вупăр карчăк шуйттан патне тарса пытаннă.

Паттăр каччăсем Хĕвеле асăрханса çĕкленĕ те тĕрленĕ сурпан çине хунă. Хĕвел тухăç енчи чи çӳллĕ сăрт çине хăпарнă, чи çӳллĕ йывăç çине улăхса хальлĕхе айван Хĕвеле асăрханса пĕлĕт çине вырнаçтарнă. Хĕвелĕн амăшĕ чупса пынă та алли çине илнĕ. Унтан кăкăрĕ çумне тытса кăкăр сĕчĕпе тăрантарнă. Çутă Хĕвел çиççе кулса

янă. Амăш сĕчĕ ăна вăй-хăват панă. Сиккелесе ташласа чупса кайнă Хĕвел таса пĕлĕт тăрăх.

Ваттисем каланă тăрăх, кашни çулах Мăн кун умĕн чăваш паттăрĕсем хĕвел тухăç енне Хĕвеле Вупăр аллинчен хăтарма каяççĕ тет. Вара пĕтĕм чăваш Хĕвеле ирĕке кăларнине, Мăн кун уявне паллă тăваççĕ. Ачасем çулталăк тăршшĕпех сывă пулччăр, ан чирлеччĕр тесе хĕвел тухнă вăхăтра вĕсене хăмлапа тата тырăпа сапаççĕ. Эпĕ те сире сапатăп.

Старик ачасене хăмлапа, тырăпа сапать.

С т а р и к. Мĕнле, вăй кĕнине туйăр-и?

А р ç ы н а ч а. Мĕнле кăсăклă халап! Пирĕн арçын ачасем те – пулас салтаксем. Ачасем, хамăр вăя кăтартар-и асаттене?

Х ĕ р а ч а. Антунпа Унтри пĕрмай хул вăй виççе тавлашаççĕ.

А р ç ы н а ч а. Халь виççе пăхăр-ха!

Х ĕ р а ч а. Пăхатпăр: хăшĕ çĕнтерет.

Антунпа Унтри е урăх арçын ачасем вăй виçмелле выляççĕ.

А ч а с е м. Унтри çĕнтерчĕ!

А н т у н. Айта-ха тепре виççе пăхар. Хальхинче эпĕ çĕнтеретĕп.

С т а р и к. Маттур, ачасем, мана, ват çынна, савăнтартăр. Эсир выльăр, савăнăр, эпĕ каям-ха, калăма чĕнме тухнăччĕ эпĕ. Сирĕнпе калаçса мансах кайнă вĕт.

Старик тухса каять.

Х ĕ р а ч а. Ачасем, пире паян асанне хăй патне чĕннĕччĕ, килтех-ши?

А ч а с е м. Айтăр асанне патне каяр! Каяр! Каяр!

Х ĕ р а ч а. Ачасем, эсир хăвăра хăнара йĕркеллĕ тытăр.

А ч а с е м кăшкăрашса чупса тухса каяççĕ. Тепĕр енчен чупса кĕреççĕ.

А р ç ы н а ч а. Эй, хуçа! Килтех-и? Пур-и?

А с а н н е. Килтех, килтех! Килĕр, килĕр, ачасем, манăн кĕтнĕ хăнасем!

А ч а с е м. Христос чĕрĕлнĕ! Христос чĕрĕлнĕ! Христос чĕрĕлнĕ!

А с а н н е. Чăн чĕрĕлнĕ! Чăн чĕрĕлнĕ! Чăн чĕрĕлнĕ!

А р ç ы н а ч а. Ну, хуçасем, мĕн паратăр?

Витре çурă сăра,
Чăкăт çурă чăкăт,
Çăмарта çурă çăмарта.
Ăна памасан –
Выртатпăр та çывратпăр!

Ача урайне выртать, кил хуçи (асанне) пӳртрен чашăкпа çăмарта йăтса тухать, сĕтел çине лартать.

А с а н н е. Килĕр, килĕр, ачасем!

Мăн кун уявне хатĕрленсе
Пысăк чанпа сăра турăм,
Пыл куркипе пыллантартăм,
Çăмартасене те хĕретсе хатĕрлерĕм.

Ачасем асанне çумне пырса ларaççĕ.

А с а н н е. Ачасем, эпĕ кучченеçне хатĕрлерĕм-ха. Ман эсир юрлани-ташланине курас килет. Савăнтарăр-ха пĕрре ватă çынна.

Х ĕ р а ч а.

Эпир туслă ачасем,
Асанне мăнукĕсем.
Пурте пĕрле пурăнатпăр,
Пурте пĕрле савăнатпăр.

А р ç ы н а ч а.

Эпир туслă ачасем,
Асанне мăнукĕсем.
Асаннене юрататпăр,
Пулăшма та тăрăшатпăр.

Х ĕ р а ч а. Ачасем, айтăр-ха асаннене юрă юрласа парар.

Ачасем юрă юрлаççĕ.

А ч а с е м.

Кĕçĕр йăва çиетпĕр,
Ыран пăтă çиетпĕр.
Кĕçĕр Сĕрен теетпĕр те,
Ыран Мăн кун теетпĕр.
Сĕрен, Сĕрен терĕмĕр.
Сĕрен çитсе иртсе кайрĕ.
Халĕ, паян, Мăн кун пулать,
Мăн кун пăтти çиетпĕр.

А с а н н е. Ах, маттур та, ачасем! Эсир мана хăвăр пултарулăхăрпа питĕ савăнтартăр. Çынсем тăванĕсем, пĕлĕшĕсем патне хăнана çӳреççĕ, савăнаççĕ, парнесем параççĕ, Мăн кун çăмарти тыттараççĕ. Эпĕ те сире хамăн кучченеçпе савăнтарам.

Асанне ачасене çăмарта валеçсе тухать.

А р ç ы н а ч а. Ачасем, айтăр паттăрла вылятпăр! Кам паттăр пулать?

А ч а с е м. Айтăр выляр!
– Эпĕ паттăр! Эпĕ!
– Çук, эпĕ!

Х ĕ р а ч а. Ачасем, ахалех тавлашса тăрар мар-ха. Малтан çĕмĕрсе пăхар. Кам паттăр пулать, çавна ĕç хушăпăр.

А ч а с е м. Килĕшетпĕр!

Ачасем çăмарта çĕмĕрмелле выляççĕ.

А н т у н. Ман çăмарта пĕрре те çĕмĕрĕлмерĕ. Эпĕ паттăр!

Х ĕ р а ч а. Юлташсем, Антуна мĕнле ĕç хушăпăр?

А р ç ы н а ч а. Вăл чăваш ташши питĕ хитре ташлать. Айтăр ăна ташлаттарар.

А ч а с е м.

Эппин, ырă хăнасем –
Пĕчĕккисем, аслисем,
Итлĕр пирĕн сăмаха,
Итлĕр чăваш юррине,
Курăр чăваш ташшине,
Савăнăр пирĕнпеле.

Антун сцена варрине тухса чăваш ташши ташлама пуçлать. Ун патне ытти арçын ачасем хутшăнаççĕ.

Х ĕ р а ч а.

Ырă сунса кĕтнĕшĕн,
Сĕтел тавра лартнăшăн,
Мăн кун парни панăшăн
Тавах сана, асанне!

А ч а с е м. Тавах сана, асанне!

А р ç ы н а ч а.

Киличчен килессĕм килчĕ,
Пĕр килсессĕн савăнассăм килчĕ.
Юри килтĕмĕр савăнмашкăн,
Çак пысăк уява иртермешкĕн.

А с а н н е. Ачасем, эсир тата Мăнкун тĕлне чуччу çакма манман-и? Эппин, васкăр! Уяв эрнинче ярăнмаллах: çил çыпăхсене вĕçтерсе каять теççĕ.

А ч а с е м. Айтăр чуччу ярăнма каяр! Айтăр çил вĕçтерер!

А ч а с е м чупса тухса каяççĕ.